27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
НОЯБРЬ
4
ШАМАТКУН
218(6713) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВЛĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем венгерсен НЬИРЕДЬХАЗА хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре малалла талăнса пынă. ТИССА шывĕн сулахай хĕррине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатса пĕтер нĕ. БЮД-СЕНТ-МИХАЛЬ хулипе чугун çул станцине, ТИССА-ДАДА, ТИССА-ДОБ, ПОЛЬГАР ятлă пысăк ялсемпе чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

БУДАПЕШТ хули енче, ТИССА шывĕ пе ДУНАЙ шывĕ хушшинче, пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, НАДЬКЕРЕШ хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЯСКАРАЕ!Е, КОЧЕР, ТАТАРСЕНТДЬЕРДИ, КУНСЕНТМИКЛОШ, САБАТ-САЛЛАШ, ФЫЛЕРСАЛЛАШ, ЧЕНГЕД, АКАСТО ятлă пысăк ялсем тата ДЕМШЕД, НАДЬАЛЛАШ, ФЫЛЕРСАЛЛАШ, ЧЕНГЕД чугун çул станцийĕсем.

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче ТИССА шывĕпе ДУНАЙ шывĕ хушшинче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 2.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Çапла вара, пирĕн çарсем ТИССА шывĕпе ДУНАЙ шывĕ хушшинче ноябрĕн 1-мĕшĕ вĕçленсе çитнĕ тĕле пĕтĕмпе нимĕçсемпе венгерсен 7.518 салтакĕ пе офицерне тыткăна илнĕ. Пирĕн çарсене Венгрии генеральнăй штабĕн начальникĕ пулнă генерал-полковник Янош Вереш тыткăна парăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчик сем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 98 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенити ăй артиллери тăшманăн 17 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Венгрире, Ньиредьхаза хулинчен çурçĕртерехре, пирĕн çарсем, тăшманăн çĕмĕрсе тăкнă чаçĕсене хăваласа пырса, анлă фронтпа Тисса шывĕ çине тухнă. Çав вăхăтра нимĕçсемпе венгерсем каçсем патĕнче капланса тăнă. Пирĕн çарсем вĕсене йывăр çухату кÿнĕ. Тыткăна нумай илнĕ. Ньиредьхаза хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, çав тери хăвăрт атакăласа, Бюд-Сент-Михаль хулине туртса илнĕ. Тисса-Доб тата Польгар чугун çул станцийĕсенче тăшман гарнизонĕсене çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă. Ку районра совет чаçĕсем тăшманпа çапăçса 20 километр малалла кайнă, кунта та Тисса шывĕ çине тухнă. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсемпе венгерсем хĕçпăшал нумай пăрахса хăварнă. Пĕр участокра кăна пĕр чаçри боецсем 28 тупă, 60 пулемет, темиçе боеприпас склачĕ тата çар пурлăхĕн пысăк обозне тытса илнĕ.

* * *

Будапешт хули енче, Тисса шывĕпе Дунай шывĕ хушшинче, пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пыраççĕ. Надькереш хулине пырса кĕмелли вырăнсенче тăшман пехотин икĕ полкĕ, танксем пулăшнипе контратакăсем туса, пирĕн подразделенисене малалла кайма чарма хăтланнă. Совет чаçĕсем, тăшмана хăйне пыра-пыра çапса, нимĕçсемпе венгерсене каялла хăваласа янă та Надькереш хулине туртса илнĕ. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен виллисем нумай выртса юлнă. Кечкемет хулипе Будапешт хули хушшинчи шоссе çулĕ районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Пирĕн çарсене Венгри столици патне кайма чарас тесе, тăшман хăйĕн çĕнĕ те çĕнĕ чаçĕсене пырса çитсенех çапăçăва кĕртсе ярать. Совет çарĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, çине тăрсах малалла куçса пыраççĕ. Татарсентдьерди ялне туртса илнĕ. Ку ял Будапешт хулинчен 46 километрта ларать. Кун каçиччен тăшманăн 2.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 58 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Трофейсем нумай тытса илнĕ. Пирĕн Дунай шывĕн хĕвелтухăç хĕррипе наступлени туса пыракан танкистсемпе пехотинецсем 25 километр малалла кайнă.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире, Гольдап хулинчен кăнтăртарахра, тăшман пехотин батальонĕ, танксем пулăшнипе çапăçăва кĕрсе кайса, разведка тăвасшăн пулнă. Совет боецĕсем тăшмана пур тĕрлĕ хĕçпăшалпа та пеме тытăннă. Нимĕçсен пирĕн позици патне çитмесĕрех каялла чакмалла пулнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли ытла выртса юлнă тата çунса кайнă 4 танкĕ тăрса юлнă.

* * *

Чехословакире, Ужгород хулинчен çурçĕртерехре, Стрельцов капитан подразделенийĕн боецĕсем нимĕçсем çирĕпленсе ларнă çÿллĕ вырăна аякран кайса çавăрса илнĕ. Вăйлă çапăçнă хыççăн пирĕн боецсем çав çÿллĕ вырăна тытса илнĕ, гитлеровецсене пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă. Чоп хулинчен хĕвеланăçнерехре совет чаçĕсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă. Тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшманăн Либава портĕнчи тата Балтика тинĕсĕнчи карапĕсене бомбăсем пăрахса штурмланă. Нимĕçсен 9 транспорчĕ шыва путнă. Унсăр пуçне, тăшманăн тата 2 пысăк транспортне самаях вăйлă сиенленĕ.

* * *

Норвегири Киркенес хулинчи халăх Хĕрлĕ Çар чаçĕсене хĕпĕртесе хирĕç тухса илнĕ. Фашистла нимĕç захватчикĕсене хуларан хăваласа кăларнă хыççăнах хула халăхĕ хăйсем пытаннă хÿтлĕхсенчен тухнă. Норвежецсем совет боецĕсемпе офицерĕсем тавра пухăна-пухăна тăнă, вĕсене ыталанă, алă панă.

Киркенес хулине пирĕн çарсем пырса кĕриччен темиçе кун маларах нимĕçсем приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх, хула халăхĕ пĕр çын юлмиччен Норвеги çĕрне шалалла куçса каймалла пулнă. Анчах та темле хăратсан та, темĕн пек ÿкĕтлесен те, халăх вырăнтан тапранман. Норвежецсем Норвеги çĕрне шалалла куçса кайма килĕшмен, вĕсем пурте çавăнтах юлнă. Хула çыннисем гитлеровецсем тунă тискер ĕçсем çинчен каласа кăтартаççĕ. Фашистла оккупантсем 4 çул ытла мирлĕ халăха çаратса, пăвса пурăннă. Кунла çитмен, каяллла чакма пуçласан, фашистсем хулана ишсе пĕтернĕ, пурăнмалли çуртсене пурне те çунтарса янă. Германин çар влаçĕсем тунă тискер преступленисем çинчен акт çырнă.

Халĕ хулара пурнăç йĕркене кĕрсе пырать. Хула халăхĕ хулана тытса тăма вăхăтлăх комитет тунă. Вăхăтлăх комитетра пĕр инженер, пĕр врач, икĕ рабочи тата вырăнти ытти çынсем те пур. Киркенес хулинче Норвеги халăхĕн наци флагĕ ялкăшса тăрать. Патриотсем пытанса пурăнакан квислинговецсене тыта-тыта тухаççĕ. Хула халăхĕ Хĕрлĕ Çар чаçĕсене ишсе пĕтернĕ çулсене юсама пулăшать. Норвежецсем аманнă совет боецĕсене юратса пăхаççĕ.

Çĕршыва çĕрулмипе пахча-çимĕç ытларах парар!

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, кунран кун çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвать. Нумай пулмасть совет çарĕсем тăшман йăвине—Хĕвелтухăç Пруссие кĕрсе кайрĕç. Темиçе кун каярах çĕнтерÿсен салючĕн хăватлă сасси Печенга (Петсамо) облаçне тăшманран тасатса çитерни çинчен пĕлтерчĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене Баренцево тинĕсĕнчен пуçласа, Балкан тăвĕсем патне çити фронтра хăватлăн пыра-пыра çапса, пирĕн тăван çĕршыва тăшманран тасатрĕ.

Çак чаплă та çутă кунсене совет халăхĕ виçĕ çул ытла кĕтсе пурăнчĕ. Совет халăхĕн çутă та таса ĕмĕчĕ халĕ ĕнтĕ пурнăçа кĕрсе пырать. Вăрçă нимĕç хулисемпе ялĕсене пырса кĕчĕ. Нимĕç захватчикĕсем урса кайса хирĕç тăраççĕ пулин те, паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕç тискер кайăкне хăйĕн шăтăкĕнчех пĕтерсе пырать. Çĕнтерÿ сехечĕ çывхарать. Çакна кĕтетпĕр эпир, совет ĕççыннисем, паян. Кĕтетпĕр çеç мар, çĕнтерĕвĕн çутă кунне çывхартас тесе, предприятисемпе учреждениесенче, колхозсенче вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлетпĕр, çĕнтерÿ хĕçпăшалне туптатпăр. Çĕнтерÿшĕн совет халăхĕ тырпул та укçа-тенкĕ те шеллемест.

Çĕршывпа Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе, пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, Украина колхозникĕсем чĕнсе каланипе, Хĕрлĕ Çар фондне 500.000 пăт тырă пачĕç. Çĕршывпа Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе, халĕ чăваш колхозникĕсемпе колхозницисем, Ярославль облаçĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине ырласа, Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе çĕрулмипе пахча-çимĕç пама тытăнчĕç. Ярославль облаçĕнчи колхозниксен пархатарлă пуçарăвне пуринчен малтан Çĕрпÿ районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем йышăнса илчĕç. Вĕсем, колхозсемпе колхозниксен запасĕнчен Октябрь уявĕ тĕлне Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 37 пин пăт çĕрулмипе пахча-çимĕç пама пулса, республикăри мĕнпур колхозниксене çĕрулмипе пахча-çимĕç памалли плана срокчен тултарассишĕн ăмăрту сарса пыма, Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç пама чĕнсе каларĕç.

Республикăри колхозниксемпе колхозницăсем çĕрпÿсен чĕнĕвне ырласа, çакăн пек обязательствăсем йышăнчĕç: государствăна çĕрулмипе пахча-çимĕç памалли плана палăртнă срок тĕлне тултармалла, ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 12.000 тонна çĕрулми тата пахча-çимĕç памалла.

Совет патриочĕсен сăмахĕ чыслăн пурнăçа кĕрсе пырать. Хатĕрлев пункчĕсене колхозсенчен çĕрулмипе пахча-çимĕç тиенĕ лавсем кунран кун ытларах та ытларах пыраççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем, Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç 700 тонна пама пулнăскерсем, темиçе кун хушшинчех 260 тонна ытла леçсе панă. Хĕрлĕ Çар фондпе çĕрулмипе пахча-çимĕç парас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртесси Çĕрпÿ, Красноармейски, Муркаш тата ытти чылай районсенчи колхозсенче ăнăçлăн пырать. Чылай колхозсем хăйсен обязательствине пурнăçа кĕртсе çитернĕ те ĕнтĕ, нумай колхозсем çывăх кунсенчех пурнăçлаççĕ.

Колхоз хресченĕсем халĕ пĕр пархатарлă шухăшпа — фашистла тискер кайăка хăйĕн йăвинче пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас туйăмпа пурăнаççĕ. Çак пархатарлă туйăм колхозсене государствăна çĕрулмипе пахча-çимĕç памалли плана срокчен тултарма кăна мар, тата Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе çĕрулмипе пахча-çимĕç памалли обязательствăсене те ăнăçлăн пурнăçа кĕртме хавaслантарать.

Анчах республикăри колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе çĕрулмипе пахча-çимĕç парас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене кашни район, кашни колхоз тăрăх вăхăтра тултармалла тăвас тесен, сахал мар ĕçлемелла-ха. Республикăри чылай колхозсем çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хатĕрлев пункчĕсене турттарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Халĕ пирĕн обязательствăна пурнăçламан колхозсем те пур-ха. Çавăнпа та çĕрулмипе пахча-çимĕçе хатĕрлев пункчĕсене турттарассине хăвăртлатмалла. Апла пулсан, партипе советăн вырăнти организацийĕсен, колхоз руководителĕсен тимлĕрех ĕçлемелле. Вĕсен çĕрулмипе пахча-çимĕç турттарас ĕçе лайăх йĕркелемелле, туртăм вăйĕпе туллин усă курмалла. Çĕрулмипе пахча-çимĕç турттарнă çĕрте социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла.

Хатĕрлев организацийĕсем умĕнче те ответлă ĕçсем тăраççĕ. Вĕсен çĕрулмипе пахча-çимĕçсем йышăнас ĕçре большевикла йĕркелĕх тумалла тата пахча-çимĕçсене пăхса усрассине лайăх организацилемелле. Анчах та çак тĕлĕшпе чылай çĕрте сÿрĕк ĕçлеççĕ-ха. Сĕнтĕр районĕнчи Ильинка тата Урпаш ялпӳвĕсем складсене вăхăтра хатĕрлемен пирки икĕ кун хушши çĕрулмипе пахча-çимĕçсене йышăнмасăр тăнă. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем хатĕрлес ĕçе вăраха хăваракан работниксене тÿрре кăларма нимĕнле сăлтав та çук. Вăрçă кунĕсенче пирĕншĕн кашни килограмм çĕрулмипе пахча-çимĕç хаклă.

Аслă Октябрь уявĕ ячĕпе пуçарнă социализмлă ăмăртăва хутшăнса, республикăри колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 12.000 тонна çĕрулмипе пахча-çимĕç пама пулчĕç. Халĕ ĕнтĕ хамăран тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар умĕнчи çак патриотла тивĕçе пирĕн чыслăн пурнăçламалла.

РИГА ХУЛИНЕ ЮСАСА УРА ÇИНЕ ТĂРАТАÇÇĔ

Нумаях пулмасть Рига хулинче фашистла вăрă-хурахсем çаратса, тустарса çÿренĕ. Çынсем урама тухман. Вĕсем хăйсене хупăрласа илсе тытса каясран хăранă, подвалсенче, чартаксенче пытанса пурăннă. Гитлеровецсем Рига портне, суднăсем тăвакан верфе, пилĕк чугун çул кĕперне, фабрикăсемпе заводсене ишсе хăварнă.

Халĕ хулара пурнăç пуçланать. Пушарсене сÿнтернĕ. Темиçе района минăсенчен тасатнă. Нимĕçсене хăваласа кăларнă хыççăн иккĕмĕш кунĕнчех çăкăр пĕçерме пуçланă. Малтанхи кунсенчех водопровода юсаса хута янă. Темиçе вунă магазин, столовăйсем, парикмахерскисем, гостиницăсем уçăлнă. Хулара нумай фабрикăсем, 6 поликлиника, 20 аптека ытла, ача çуратмалли 7 çурт ĕçлеççĕ ĕнтĕ. Почтăн 5 отделенийĕ ĕçлет. Вĕсем урлă темиçе пин çыру кайнă ĕнтĕ. Çывăх вăхăтрах 30 шкул уçăлать.

Рига çыннисем ĕçе тытăнаççĕ. Кашни кунах хула Советне темиçе çĕр çын пырать. Вĕсем хăйсене хулана юсаса ура çине тăратас ĕçе яма ыйтаççĕ. (ТАСС).

ПĔРРЕМĔШ БАРЖĂНА ТУСА ПĔТЕРНĔ

Одессăра Марти ячĕпе тăракан суднăсем тăвакан завода юсаса хута яраççĕ. Çав завод пĕрремĕш пысăк баржăна срокчен 18 кун малтан туса пĕтерсе, шыва кăларса янă ĕнтĕ.

(ТАСС).

Салтыков-Щедрин ячĕпе тăракан государство библиотекин тĕп вулав залне уçнă

Ленинградра виçĕ çул хушши хупăнса тăнă хыççăн Салтыков-Щедрин ячĕпе тăракан государство библиотекин тĕп вулав залне юсаса çĕнĕрен уçнă.

Çав зала вырăс интеллигенцийĕн нумай ăрăвĕсем пĕлеççĕ. Унта В. И. Ленин хăйĕн «Развитие капитализма в России» ятлă кĕнекине çырнă. Унта аслă ученыйсем тата общество деятелĕсем Сеченов, Тимирязев, Павлов, Чернышевский, Добролюбов тата ыттисем те ĕçленĕ.

Ленинграда тăшман хупăрласа тăнă вăхăтра кĕнекесем усракан çурта темиçе снаряд лекнĕ, библиотека çывăхĕнчех авиабомбăсем çурăла-çурăла кайнă. анчах та библиотека ĕçлеме чарăнман, вăл пулас текенсене кĕнекесем бомбоубежищĕре панă.

Вулав залне чаплă лару туса уçнă

(ТАСС).

Чăваш парторганизацийĕнче массăллă-политикăллă ĕç тата идеологи ĕçĕ мĕнле тăни çинчен тата çав ĕçсене лайăхлатмалли мерăсем çинчен*)

И. ЧАРЫКОВ

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ

Пирĕн парти марксизм-ленинизм теорине яланах калама çук пысăк вырăна хурса хакланă, хамăрăн халăха Ленин—Сталин идейисене вĕрентсе пынă; партипе совет тата комсомол кадрĕсене общество аталанăвĕн тата политикăллă кĕрешĕвĕн законĕсем çинчен вĕрентнипе ывăнма пĕлмесĕр хĕçпăшаллантарса пынă; практика теорисĕр суккăр тата вăйсăр пулнă пекех, теори те, вăл практикăран уйăрăлса тăрать пулсан, вăйсăр пулни çинчен вĕрентнĕ.

Партин XVIII-мĕш съездĕнче Сталин юлташ çапла каланă: «Наукăн пĕр отрасли пур, вăл отраслĕне пĕлни наукăн пур отраслисенчи большевиксемшĕн те обязательнă пулма тивĕç, çакă вăл—марксистла-ленинла наука, общество çинчен, общество аталанăвĕн законĕсем çинчен, пролетариллĕ революци аталанăвĕн законĕсем çинчен, социализм строительстви аталанăвĕн законĕсем çинчен, коммунизм çĕнтерĕвĕ çинчен вĕрентекен наука... Çакна аксиома вырăннех йышăнмалла: государство тата парти ĕçĕн кирек хăш отраслисенчи работниксен политикăллă пĕлĕвĕ тата марксистла-ленинла ăнланулăхĕ мĕн чухлĕ çÿлĕ, ĕç хăй те çавăн чухлĕ çÿлĕ тата ăнăçлăрах, ĕçĕн результачĕсем те çавăн чухлĕ пысăкрах...». Сталин юлташ пирĕн партие, кадрсене тата халăха çĕнĕ идейăллă хĕçпăшалпа — «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекипе пуянлатрĕ. Çав кĕнекере вăл, малашнехине наука тĕлĕшпе питĕ витĕр курса тăрса, вăрçă мĕнле пулса пырассине тата çĕнтерĕве мĕнле майпа тумаллине кăтартса пачĕ.

Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнеки марксизм-ленинизм теорийĕ. Сталин юлташ çĕнĕ условисенче аталантарнăскер, малалла çав тери пысăк утăм тунине кăтартса парать. Ленин—Сталин идейи, коммунистсен партин идейи пирĕн çĕршывра татăкланах çĕнтерчĕ, вăл массăсем хушшине кĕрсе вырнаçса питех те пысăк материальнăй вăй пулса тăчĕ.

Вăрçă истори аталанăвне питĕ хăвăртлатнине тата çĕнĕ ыйтусем кăларса тăратнине асра тытас пулать. Çав ыйтусене совет çыннисем тĕрĕс ăнланни, хамăр малалла мĕнле аталанса пырассине витĕр курса тăни, тĕрлĕ ĕçсемпе япаласене марксизм-ленинизм кăтартнă пек хаклама пĕлни кирлĕ. Çавăнпа та парти организацисем идеологи ĕçне мĕн чухлĕ те пулин вăйсăрлатни е идеологи фронтĕнче тимсĕрлĕх пулни пысăк йăнăш туни пулнă пулĕччĕ.

Идеологи ĕçĕн ыйтăвĕсем халĕ, уйрăмах вăрçă кунĕсенче, калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. «Что делать» ятлă кĕнекерех ĕнтĕ Ленин çапла çырнă: «Социализмлă идеологие мĕнле те пулин хакламӑсăр тăни, вăл идеологирен мĕнле те пулин пăрăнса тăни, çапла вара, буржуази идеологийĕ вăйланнине пĕлтерет», тенĕ. Хамăр хушăмăра тăшманла идеологи кĕрсе каяс хăрушлăхран Сталин юлташ партипе халăха яланах асăрхаттарса тăнă. Çав тăшманла идеологи экономикăра тата çынсен ăнланăвĕнче капитализм юлашкийĕсене пичĕртсе яма тата вăйлатма тăрăшать. Пирĕн, большевиксен, тăшман çавăн пек хăтрĕн, большевиксен, тăшман çавăн пек хăтланнисене хирĕç пăшал тарне яланах типĕ тытмалла, идеологи фронтĕнче яланах сисĕмлĕ пулмалла, тăшманла идеологи пасемлĕ пулмалла, тăшманла идеологи палăрнисене тăтăшах тăрă шыв çине кăларса пыма вĕрентет. Пирĕн хамăрăн идейăллă хĕçпăшала татах та лайăхрах хăйраса çивĕчлетмелле, ăна тăшманла идеологие хирĕç вăйлăн кĕрешме хатĕр тытмалла. Сталин юлташ пире идеологи фронтĕнчи сисĕмлĕхе çÿле çĕклеме, марксизм-ленинизмран пăрăннине хăюллăн критиклеме, тăшманла идеологи палăрнисене тăтăшах тăрă шыв çине кăларса пыма вĕрентет. Пирĕн парти организацисен кирек мĕнле суя шухăшсене те вăхăтра тупса палăртма, партин уйрăм членĕсен пуçне пăтратма пултаракан ыйтусене вăхăтра туйса илме, урăхла каласан, идейăллă-политикăллă ĕçе вăхăтра та кирлĕ пек туса пыма пĕлмелле.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Тутар парторганизацийĕнче массăллă-политикăллă ĕç тата идеологи ĕçĕ мĕнле тăни çинчен тата çав ĕçсене лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени пирĕншĕн ĕç программи пулса тăрать. Партин Центральнăй Комитечĕн çÿлте асăннă постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ чылай конкретлă ĕçсем палăртса ĕçе кĕртрĕ. ВКП(б) Обкомĕ çумĕнче ултă уйăх вĕренмелли парти курсĕ организациленĕ, унта икĕ выпуск туса партипе совет тата комсомол работникĕсене 200 çынна ытла вĕрентсе хатĕрленĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен пур секретарĕсем валли те, ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен пĕрремĕш секретарĕсем валли, пропагандăпа агитаци отделĕсен заведующийĕсем, ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен оргинструкторски отделĕсен заведующийĕсем, парткабинетсен заведующийĕсем тата районри хаçатсен редакторĕсем валли пĕр уйăхлăх курссем организациленĕ. ВКП(б) Обкомĕ çумĕнче 40 çынран докладчиксен группине организациленĕ, вĕсем 1944 çулта 250 докладпа лекци туса панă.

Республикăри пиншер коммунистсемпе комсомолецсем пирĕн партин историйĕпе теорине тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ. 5.875 коммунистпа комсомолец тата интеллигент иртнĕ хĕлте 400 кружокра вĕреннĕ, вĕсем Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренсе çитнĕ.

Анчах та çак цифрăсемпе лăпланса ларни пачах та тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен пирĕн республикăри парторганизацире партиллĕ пропаганда ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. ВКП(б) райкомĕсем районри массăллă-политикăллă ĕçе тата идеологи ĕçне начар ертсе пыни çинчен калакан фактсем чылай кăтартса пама пулать. ВКП(б) Советски райкомĕ 1944 çул хушшинче коммунистсем, комсомолецсем тата районри интеллигенци политикăна мĕнле вĕренни çинчен пĕр хутчен те сÿтсе-явман. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче райкомăн парткабинечĕ большевиксен партин историйĕ тата теорийĕ тăрăх лекцисем, консультацисем тата юлташла калаçусем ирттермен. Райкомпа пуçламĕш парторганизацисен руководителĕсем: вăрçă условийĕсенче кадрсем теорие харпăрхăй тĕллĕн вĕренес ĕçе организацилеме май çук, текен шухăшпа килĕшсе ларнă. Вĕсем районри партиллĕ пропаганда ĕçĕшĕн ответлăха туймаççĕ. Партиллĕ пропаганда ĕçне райком контроллесе тăман тата ертсе пыман пирки районри ертсе пыракан чылай работниксем идейăпа теори тĕлĕшĕнчен кая юлнă, хальхи лару-тăрăва тивĕçлипе ăнланса илме пултараймаççĕ. Советски райкомĕн пропаганда отделĕн заведующийĕ, парткабинет заведующийĕ тата пропагандисчĕсем çураки пуçланнăранпа октябрь уйăхĕн варрине çитиччен хăйсене çирĕплетсе панă колхозсенче уполномоченнăйсем пулса ĕçленĕ. Çакăн пек фактсем ытти районсенчи парторганизацисенче те пулкалаççĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче наукăпа культура енчен пысăк вăйсем пур. Унта чăвашсен пединституч ĕçлет. Анчах парти райкомĕ идеологи ыйтăвĕсемпе пачах та ĕçлемест. Большевиксен партин историйĕпе теорийĕ тăрăх лекцисемпе консультацисем ирттермеççĕ. ВКП(б) историне тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренмелли кружоксем ĕçлеме чарăннă, коммунистсем харпăрхăй тĕллĕн вĕренме пăрахнă, вĕсем парткабинета çÿремеççĕ, хăйсем тĕллĕн вĕренме кĕнекесем илмеççĕ. Парткабинет çурчĕ таса мар, илемлĕ мар. Вăл çуртра юлашки вăхăтченех питĕ кивелсе кайнă плакатсемпе лозунгсем çакăнса тăраççĕ.

Идеологи ĕçĕ Элĕк, Сĕнтĕр, Ишлей, Первомайски тата ытти районсенче те çавăн пекех çителĕксĕр пулса пырать. Пирĕн хуласенчи парторганизацисенче те çитменлĕхсем нумай-ха. Кадрсем хушшинчи идеологи ĕçĕ çавăн пек начар пулса пынипе килĕшме çук. Агитациллĕ-пропагандăллă ĕç çавăн пек çителĕксĕр пулса пынине халех пĕтерес пулать.

Агитациллĕ-массăллă ĕç ыйтăвĕсем çинчен каланă май, Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозри агитколлективăн лайăх ĕçĕ çинчен чарăнса тăмалла. Çак агитколлектив 40 çынран тăрать. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче вăл массăллă-политикăллă ĕçе лайăх туса пырать. Вăл план тăрăх ĕçлет, кашни агитатора уйрăм участоксене çирĕплетнĕ. Чи лайăх агитатор-производственниксем Петрова, Николаева тата ыттисем те тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра нормăна 200—225 процент тултарса пынă. Агитколлектив докладсем, калаçусем тăтăшах туса ирттерет, колхозниксене хаçатсем вуласа парать, партипе правительствăн решенийĕсемпе паллаштарать. Кунта кăтарту хăми тунă, хĕрлĕ ялавсем памалла тунă, наглядлăй агитацие лайăх йĕркеленĕ, агрокружоксем, ялхуçалăх выставки организациленĕ тата ытти те. Парторганизаци пулăхăвĕсенче агитациллĕ-масăллă ĕç ыйтăвĕсене час-часах сÿтсе-яваççĕ. 1943 çулта «Дружба» колхоз, государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене тултарнă хыççăн тата государствăна 1.685 центнер тырă сутнă хыççăн, кашни ĕçкунĕ пуçне 3-шер килограмм тырă валеççе панă. Николаев бригади 76 гектар çинче кашни гектартан 25-шер центнер, Емельянов бригади 60 гектар çинче кашни гектартан 19-шар центнер ыраш пухса илнĕ. Кăçал пĕрремĕш вырăна 6-мĕш бригада йышăннă, вăл кашни гектартан вăтам шутпа ыраш 24-шар центнер, сĕлĕ 27-шер центнер пухса илнĕ. Колхоз кăçал та мĕнпур обязательствăсене срокчен тултарнă, ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те ăнăçлăн вĕçленĕ. Унăн халĕ 140 ĕне пур (планпа 120 пуç пулмалла), 300 ытла сурăх (планпа 190 пулмалла) тата 20 сысна пур. Комсомолецсем кунта колхоз фермисемпе лаша витисене шефа илнĕ.

Парти райкомĕ çак колхозра темиçе хут та колхоз председателĕсемпе агитколлектив руководителĕсен канашлăвĕсене ирттернĕ, кунти лайăх опытпа паллаштарнă, «Дружба» колхоз хăй Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозран пример илсе ĕçлет.

Елчĕк районĕнчи «Марс» тата Ворошилов ячĕпе тăракан, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Етĕрне районĕнчи «Парижская Коммуна» тата ытти колхозсенче те агитколлективсем агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе тĕрĕс организацилени, ăна парторганизацисем куллен ертсе пырсан, пирĕн ĕçре, уйрăмăнах ялхуçалăхĕнчи хĕрÿллĕ ĕçсем вăхăтĕнче, калама çук пысăк пулăшу парать. Пирĕн ялхуçалăхĕнчи ăнăçусем, тÿрех каламалла, ялта агитациллĕ-массăллă ĕçе тĕрĕс йĕркеленинчен нумай килеççĕ.

Çав вăхăтрах хамăрăн республикăри ĕççыннисем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçри пысăк çитменлĕхсем çинчен те чарăнса тăмасăр иртсе каймалла мар. Пуринчен малтан çакна палăртмалла: пирĕн парторганизацисем агитколлектив руководителĕсен, агитаторсен семинарĕсене йĕркеллĕ ирттерсе пымаççĕ, ирттерсессĕн те вĕсене формишĕн кăна, идейăпа политика тĕлĕшĕнчен аялти пусăмра тăрса ирттереççĕ. Агитацин идейăллă содержанине çителĕксĕр контроллесе тăраççĕ. Агитаторсен йышне ĕçе пĕлекен çынсене, промышленноçпа транспортри тата ялхуçалăхĕнчи авторитетлă производственниксене сахал явăçтараççĕ. Çавна пула кулленхи политинформацисем мĕнпур халăх хушшинче пулса пымаççĕ. Çапла, Сăмахран, Канашри вагонсем юсакан заводра çĕршывпа тĕнчере пулса иртекен ĕçсем çинчен нумай рабочисем пĕлмеççĕ. Агитациллĕ-массăллă ĕçе каçхи сменăсенче тата рабочисен общежитийĕсенче уйрăмах начар йĕркеленĕ. Элĕк МТС-ĕн район центрĕнчи трактор бригадин тракторисчĕсемпе комбайнерĕсем эрнешер хаçат курмаççĕ, вĕсене пухса калаçусем ирттермеççĕ. Çавăн пек фактсене республикăри ытти районсенче те курма пулать.

Предприятисенчи, учреждениесенчи тата колхозсенчи агитациллĕ-массăллă ĕçе ертсе пырассине тĕпренех улăштармалла.

Докладчиксемпе ĕçлессине вăйлатмалла, ертсе пыракан работниксен ялта политика ыйтăвĕсемпе докладсем ытларах тумалла. Ертсе пыракан кадрсен пĕр пайĕ ĕççыннисем хушшинчи политикăллă ĕçрен пăрăнса тăнине пĕтерме вăхăт ĕнтĕ. Çакăнпа пĕрлех лекцисемпе докладсен идейăллă-политикăллă содержанине контроллесе тăрассине те вăйлатмалла, докладсемпе лекцисен темисене пуянлатмалла.

Парти Обкомĕн бюровĕ хăйĕн решенийĕнче парти райкомĕсемпе горкомĕсене, çутĕç органĕсене, комсомолпа профсоюз организацийĕсене, наука тата культурăпа çутĕç учрежденийĕсене, Чăвашгизпа Радиокомитета ĕççыннисем хушшинче çутçантаăк çинчен вĕрентекен пропагандăна анлăн сарма, çак ĕçе хамăрăн интеллигенции вăйĕсене явăçтарма хушса хăварчĕ. Анчах Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çав решение пурнăçа кĕртме васкамасть-ха, çакна ĕнтĕ, паллах, йĕркеллĕ теме çук.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Чăваш республикинчи культурăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсем çинчен» решени йышăнчĕ. Унта Чăваш республикинчи культурăллă çутĕç учрежденийĕсем чылайĕшĕсем çителĕксĕр ĕçленине палăртнă тата ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме хушнă. Партин Центральнăй Комитечĕ йышăннă решени пире пысăк пулăшу пачĕ. Пĕр августпа сентябрь уйăхĕсенче кăна 71 вулав çуртне, колхозсенчи 20 клуба, ялсенчи 2 библиотекăна çĕнĕрен йĕркелесе ура çине тăратнă; 125 вулав çуртне, районсенчи библиотекăсемпе культура çурчĕсене — 15-шне юсанă. Колхоз театрĕпе пуканесен театрĕ, театр ĕçне вĕрентекен училище, музыка шкулĕ, художествăллă студи ĕçлеме тытăннă, картинăсен галлерийине, краеведени музейне тата филармоние уçма хатĕрленсе çитнĕ. Чăн та, эпир академи театрне срокра уçма пултараймарăмăр, анчах çакна та палăртас пулать: театр çурчĕ икĕ хут ытларах аслăланать, ăна туса йĕркелеме эпир пĕр миллион тенке яхăн укçа хыватпăр. Театра туса лартсан, пирĕн уншăн хĕрелмелле пулмĕ.

Пирĕн республикăра 621 вулав çурчĕ, колхозсенче 223 клуб тата рабочисен 4 клубĕ, район центрĕсенче 28 культура çурчĕ, 28 библиотека, хуласенче 3 библиотека ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем хăйсен халăх хушшинчи ĕçне начар мар йĕркеленĕ. Сăмахран, Шăхасан районĕнчи Уйкас-Кипек вулав çуртне (заведующийĕ Кириллова юлташ) илер. Вулав çурчĕ таса та типтерлĕ, сĕтелсемпе чÿречесем çинче — чечексем, вулав çурчĕн стенисене паянхи кун çинчен калакан лозунгсемпе тата плакатсемпе илемлетнĕ. Вулав çурчĕ колхозниксем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе куллен план тăрăх туса пырать, ĕççыннисене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе паллаштарать, калаçусем туса ирттерет. Кунтах колхозниксене хаçат-журналсемпе илемлĕ литература вуласа парассине начар мар йĕркеленĕ. Вулав

*) ВКП(б) Обкомĕн XX-мĕш пленумĕнче тунă докладран.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Чăваш парторганизацийĕнче массăллă-политикăллă ĕç тата идеологи ĕçĕ мĕнле тăни çинчен тата çав ĕçсене лайăхлатмалли мерăсем çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

çуртĕнче тăтăшах стена хаçачĕ тухса тăрать, хорпа драма кружокĕсем ĕçлеççĕ, шашкăсемпе шахматсем тата домино пур. Каçсенче кунта çамрăксемпе çитĕннĕ колхозниксем яланах тулли пулаççĕ. Çавăн пекех Куславкка районĕнчи Карач вулав çурчĕ, Вăрмар районĕнчи Чупай вулав çурчĕ, Вăрнар районĕнчи Кольцовка вулав çурчĕ, Елчĕк районĕнчи Сăрьел вулав çурчĕ, Чкаловски районри Çĕнĕ Ахпӳрт колхозĕн клубĕ, Куславкка комбиначĕн клубĕ, Çĕрпӳ районĕн центрĕнчи культура çурчĕ, Сĕнтĕрвăрринчи районри библиотека тата ытти нумайĕшĕсем те лайăх ĕçлеççĕ.

Анчах çапах та ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пирĕн республикăри культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕ çинчен йышăннă решение эпир пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртмен-ха, чылай районсенчи политпросвет учрежденийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур.

Советски районра 23 вулав çуртĕнчен çуррине яхăн ĕçлемесĕр лараççĕ. Элĕк районĕнчи Иваньковăри вулав çуртĕнчен çĕрулми хумалли склад туса хунă. Çакă питех те тĕлĕнтерет: Иваньковăра уполномоченнăй пулса ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Ефимов юлташ ĕçленĕ, ун куçĕ умĕнчех тата вăл килĕшнипе вулав çуртĕнчен çавăн пек склад туса хунă. Çĕмĕрле районĕнчи 17 вулав çуртĕнчен 8-шĕн çеç хăйсен çурчĕсем пур.

Партин нумай райкомĕсем колхозсенчи кивĕ кĕнекесем тултарса шкафпа сĕтел лартнă клубсене вулав çурчĕсем тесе шутлаççĕ, çав çуртсене вара хутса ăшăтмаççĕ, тасатмаççĕ, паллах, унта никам та çӳремест. Вулав çурчĕсемпе клубсенчи библиотекăсене никам та тĕрĕслемест, вĕсенчи сĕтел-пукансене юсамаççĕ, вĕсене хĕле хатĕрлемеççĕ. Политикăллă çутĕçĕн хăшпĕр работникĕсене васкавлăн та ăнсăртран тупса лартнă, вĕсем хăйсен ĕçне туса пыма пултараймаççĕ. Чăваш республикин Çутĕç Халăх Комиссариачĕн вырăнсенчи çутĕç отделĕсем, комсомол райкомĕсемпе горкомĕсем тата ВЛКСМ Обкомĕ политпросвет учрежденийĕсен ĕçне çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Кăçалхи октябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшне çитиччен республикăра политпросвет учрежденийĕсен ĕçне общество организацийĕсем пăхса тухрĕç. Çак мероприятие туса ирттернĕ хыççăн политпросвет учрежденийĕсен пурин те кăтартуллăн ĕçлеме тытăнмалла. Вулав çуртне чăннипех те ялти культурăллă-массăллă ĕçĕн центрĕ туса хурас пулать. Çавна пурнăçа кĕртес тесен, районсенчи парторганизацисен руководителĕсем вулав çурчĕсем валли халех опытлă кадрсем тупса пама тата вĕсемпе малашне тăтăшах ĕçлесе пыма тивĕçлĕ.

Халăх вăйне фронта пулăшма мобилизацилес, марксизм-ленинизм идейисене сарас ĕçре пирĕн пичет пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пичет—парти аллинчи çивĕч хĕçпăшал. Вăл халăх хушшинчи политикăллă ĕçĕн паха центрĕ пулса тăма тивĕçлĕ. Анчах пирĕн республикăри тата районсенчи пичетĕн пысăк çитменлĕхсем пур-ха, хаçатсенче пропаганда ыйтăвĕсемпе çырнă статьясем çукпа пĕрех, уйрăм коллективсен лайăх опытне çутатса пымаççĕ, çитменлĕхсене сӳрĕк питлеççĕ, районри хаçатсенче вара йăнăшсемпе кăлтăксем нумай. Республикăри хаçатсем вырăнти хаçатсене сахал пăхса тухаççĕ, корреспондентсен активĕн йышĕ пĕчĕккĕ, вĕсемпе япăх ĕçлеççĕ. Час-часах хаçатсен страницисене официальнăй материалсемпе тултарса лартаççĕ. Парти райкомĕсемпе горкомĕсем хаçатсен ĕçне куллен ертсе пымаççĕ. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ, районри хăшпĕр хаçатсен (Çĕрпӳ, Пăрачкав, Ишлей тата ыттисен) ĕçĕсене сӳтсе-явса, вĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă решенисем йышăнчĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсем çавăн пекех тата парти Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ те пичет ĕçне куллен контроллесе тăма, палăрнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма тивĕçлĕ.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн решенийĕ тăрăх, парти Обкомĕн бюровĕ горкомсене вырăнти радиовещани ĕçне организацилеме хушрĕ. Анчах Етĕрне, Элĕк, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсенче вырăнти радиовещани ĕçне халиччен те организацилемен-ха. Парти органĕсен руководителĕсем парти Обкомĕпе тата Радиокомитетпа килĕштермесĕрех Радиовещани работникĕсене урăх ĕçсене куçараççĕ е вĕсене колхозсенче уполномоченнăйсем вырăнĕнче темиçе уйăхшар ĕçлеттереççĕ. Вырăнти радиовещани ĕçне организациленĕ çĕрте те радиопа паракан материалсем питĕ япăх пулаççĕ. Парти райкомĕсемпе горкомĕсем вырăнти радиовещани ĕçне ертсе пымаççĕ, республикăри Радиокомитет та ăна çителĕксĕр ертсе пырать. Парти Обкомĕ кăçалхи çул Канаш хулинче тата Канаш районĕнче радиовещани ĕçĕ мĕнле тăни çинчен сӳтсе-яврĕ, партин мĕнпур районсемпе хуласенчи органĕсене вырăнти радиовещани ĕçне тĕпренех лайăхлатма хушрĕ. Çак ыйту тăрăх йышăннă решенисене пĕр пăркаланмасăрах пурнăçа кĕртес пулать.

Кино халăха идейăллă-политикăллă воспитани памалли майсенчен пĕри пулса тăрать. Парти организацийĕсем массăллă агитацин çак паха майĕпе тĕрĕс усă курни пысăк результатсем пама пултарать. Анчах та кино ĕçне пирĕн хакламаççĕ. ВКП(б) Обкомĕн пропаганда отделĕ кинофикаци органĕсен ĕçне çителĕксĕр контроллесе тăрать. Республикăри 108 кинопередвижкăран районсенче 65-шĕ кăна ĕçлет. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, халăха кино курма явăçтарасси вăйсăрланнă.

Кино ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес пулать, республика районĕсемпе колхозĕсенче кино кăтартас ĕçе йĕркеллĕн те тăтăшах туса пырас пулать. Парти органĕсем кинофикаци ĕçне ертсе пырассине вăйлатма тивĕçлĕ.

Сталин юлташ пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ, вăрçăн мĕнпур йывăрлăхĕсемпе тĕрĕслевне тӳссе ирттерсе, фашистла захватчиксене хирĕç мĕнпур совет çыннисем туса пыракан пĕрлĕхлĕ кĕрешӳре татах та ытларах пиçĕхсе çирĕпленни çинчен каларĕ. Вăрçă вăхăтĕнче ССР Союзĕнчи халăхсен нациллĕ тивĕçлĕхĕсем татах та ытларах ӳсрĕç, кашни халăх хăйĕн иртнĕ кун-çулĕне, хăйĕн геройĕсемпе, хăйĕн литературипе тата искусствипе ытларах интересленме пуçларĕ. Пирĕн формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культурăна ывăнма пĕлмесĕр малалла аталантарса пырас пулать.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен Управленийĕ искусство ĕçне çителĕксĕр ертсе пынине пула, писательсемпе драматургсем, поэтсемпе композиторсем хушшинче тачă çыхăну çуккине пула, театрсемпе ансамблĕн репертуарĕ чăвашла çырнă пьесăсемпе тата музыкăллă произведенисемпе пуянланса пымасть. Çапла, сăмахран, юрăпа ташă ансамблĕн 1944 çулхи репертуарĕнче хор валли çырнă 30 произведенирен — 20 произведенийĕ вырăс композиторĕсен, 10 произведени кăна вара чăваш композиторĕсен произведенийĕсем пулса тăраççĕ.

Халăх пултарулăхĕн çурчĕ ялти художествăллă пултарулăх ĕçне ертсе пымасть, кружоксене куллен пулăшу парса тăмасть. Çавна пула художествăллă пултарулăхăн 600 кружокĕнчен хальхи вăхăтра 200 кружок кăна ĕçлет. Ыйтас килет: искусство ĕçĕсен Управленийĕ малашне те çакăн пек ĕçлесе пырсан, Чăваш республики 25 çул тултарнă кунсенче эпир мĕн кăтартма пултарăпăр-ши?

Республикăра чĕлхепе литературăн тата историн наукăпа тĕпчев институчĕ пур, анчах вăл чăваш халăхĕн историйĕпе тата литературине вĕçне çитиччен туса пĕтернĕ пĕр ĕç те памарĕ-ха. Институт кăларнă уйрăм произведенисенче чылай ыйтусене çиелтен çутатса панă, çав произведенисем паянхи кун ыйтнине тивĕçтереймеççĕ.

Чăваш республикинчи писательсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче совет тылне кăтартса паракан произведенисем сахал пачĕç. Отечественнăй вăрçă темисемпе çырнă пьесăсем çук. Чăваш историкĕсемпе литераторĕсем хăйсен ĕçĕсенче совет саманине, Чăваш республикине социализмла урăхлатса йĕркеленине, республикăн экономикипе культури ӳссе чечекленнине сӳрĕк çутатаççĕ.

Çак фактсем ĕнтĕ пурте пĕр вывод патне илсе пыраççĕ: партин Центральный Комитечĕ «Тутар парторганизацийĕнчи массăллă-политикăллă ĕç тата идеологи ĕçĕ мĕнле тăни çинчен тата çав ĕçсене лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени Чăваш парторганизацине те пĕтĕмĕшпех пырса тивет.

Формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культурăна малалла аталантарса пырас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, чăваш халăхĕн историне наука енчен çутатса парассине организацилемелле, ют çĕршыв захватчикĕсене хирĕç, патша влаçне хирĕç, помещиксемпе капиталистсен пусмăрне хирĕç вырăс халăхĕпе чăваш халăхĕ пĕрле кĕрешнине тĕпчесе çутатса парасси çине, çавăн пекех Чăваш республикине социализмла урăхлатса йĕркелени историне çутатса парасси çине, чăваш халăхĕн паллă çыннисен тата унăн Отечественнăй вăрçăри паттăр ывăлĕсен ĕçĕсене çутатса парасси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Парти органĕсем идеологие пиçĕхсе йĕркелеме тата ăна сарма пулăшакан учрежденисене — издательствăсене, радиовещание, театрсене, Совет писателĕсен Союзĕн отделенине куллен тата конкретлăн ертсе пыма тивĕçлĕ, шкулсемпе аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕрентӳ ĕçне мĕнле организациленипе интересленмелле, идеологи ĕçне тĕпренех вăйлатмалла.

Партипе совет кадрĕсен тата интеллигенцин идейăллă-политикăллă пĕлӳлĕхне ӳстерес шутпа, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ панă кăтартусем тăрăх, парти организацийĕсенче парти членĕсемпе кандидачĕсем ВКП(б) историне тата большевикла партин теорине вĕренес ĕçе анлăн сармалла, пирĕн кадрсем марксизм-ленинизм теорине хăйсем тĕллĕн вĕренес метода ура çине тăратмалла, çав кадрсене вĕренме пулăшмалла.

Шупашкар хулинче — марксизм-ленинизм университетне, районсенче — партин каçхи шкулĕсене, ялсенчи пуçламăш парторганизацисенче вара — политика шкулĕсене организацилес пулать, çав политшкулсене ертсе пырассине лайăхрах вĕренсе хатĕрленнĕ юлташсем çине хурас пулать. Шупашкарта ВКП(б) Обкомĕ çумĕнче çулталăк вĕренмелли парти шкулĕ ĕçлет, унта 100 çын вĕренет.

Пичет ĕçне парти енчен ертсе пырассине вăйлатас пулать, редакцисен ĕç планĕсене парти комитечĕсен бюровĕсенче сӳтсе-явас пулать. Пĕр-пĕрин опытне сарас тата хаçат работникĕсен квалификацине ӳстерес шутпа республикăри хаçатсен редакцийĕсенче райхаçат редакторĕсемпе секретарĕсене практикăллă ĕç витĕр кăларассине организацилемелле. Хаçат редакцийĕсенче парти пурнăçĕпе пропаганда отделĕсене çĕнĕрен туса йĕркелемелле, хаçатсенче пропагандистсемпе агитаторсене пулăшмалли материалсем тăтăшах пичетлесе пымалла.

Агитаторсене инструкцисем парса пулăшассине вăйлатмалла, колхозсемпе предприятисенче туса ирттерекен докладсемпе лекцисен идейăллă-политикăллă содержанине контроллесе тăрассине организацилемелле.

Пирĕн задача — çамрăксене воспитани парас ĕçе тĕпренех вăйлатасси, комсомол организацийĕсене организацилĕхпе политика тĕлĕшĕнчен çирĕплетсе пырасси, комсомол пурнăçне хаçатсенче тăтăшах çутатса пырасси, комсомол организацийĕсене агитаципе пропаганда ĕçне йĕркелеме куллен пулăшса пырасси пулса тăрать.

Отечественнăй аслă вăрçăн татăклă тапхăрĕнче, çĕршыв пире фронта пулăшнă çĕре мĕнпур вăйсене пама хушнă чухне, массăллă-политикăллă ĕçпе идеологи ĕçне тĕпренех лайăхлатни фашистла нимĕç захватчикĕсене пуçĕпех çапса аркатас ĕçе мĕнпур халăхăн вăйне мобилизацилеме май парĕ.

Эпир пурăнса ирттерекен кунсем партин пур сыпăкĕсенче те идеологи ĕçне çине тăрсах вăйлатма, ленинизм пропагандине татах та анлăнрах туса пыма хушаççĕ.

Республикăри парторганизацисен республикăри ĕççыннисене Марксăн—Энгельсăн — Ленинăн — Сталинăн аслă та çĕнтерӳллĕ ялавĕ тавра татах та таччăнрах пĕтĕçтермелле, марксистла-ленинла идеологие таса та чыслă упраса тăмалла.

Хĕрлĕ Çар фондне—çĕрулмипе пахча-çимĕç

СĔНТĔР, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозниксемпе колхозницăсем, Çĕрпӳ районĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине йышăнса, пĕтĕмпе 700 тонна çĕрулмипе пахча-çимĕç пама пулчĕç. Халĕ колхозсенчен хатĕрлев пунктне кунсерен темиçе çĕршер лав кайса тăрать. Вĕсем хăйсен обязательствисене пурнăça кĕртме çĕрулмипе пахча-çимĕç турттараççĕ. Нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне памалли çĕрулмине турттарса пĕтерчĕç ĕнтĕ. Çапла, Чкалов ячĕпе тăракан колхоз, 660 пăт пама пулнăскер, Фрунзе ячĕпе тăракан колхоз, 480 пăт пама пулнăскер, тата «Новый путь» колхоз, 600 пăт пама пулнăскер, çĕрулмине хатĕрлев пунктне пĕтĕмпех леçсе пĕтернĕ. Хачăк ялсоветĕнчи «Коминтерн», Юнга ялсоветĕнчи «Çĕнĕ Юнга», Ильника ялсоветĕнчи «Хлебороб» тата ытти чылай колхозсем те хатĕрлев пунктне çĕрулми турттарса пĕтерне.

Колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç парас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси потребкоопераци ĕçĕнчен те нумай килет. Потребкоопераци работникĕсен çĕрулмипе пахча-çимĕçсене йышăнас тата вĕсене пăхса усрас ĕçе лайăх йĕркелемелле. Анчах та Ильинкăпа Урпашри ялпосем кирлĕ пек хатĕрленменнине пула, çĕрулмипе пахча-çимĕç йышăнассине икĕ кун хушши тăснă. Кун пек сӳрĕклĕхе пĕтермелле. Халĕ вăрçă вăхăтĕнче государствăшăн кашни килограмм çĕрулмипе пахча-çимĕç хаклă.

С. СОКОЛОВ.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар фондне пама çĕрулмипе пахча-çимĕç турттарасси кунран кунах вăйланса пырать. «Правда» колхоз 17 тонна пама пулнăскер, «Пищевик» колхоз, 15 тонна пама пулнăскер, «Наркомюст» колхоз, 8 тонна пама пулнăскер, Киров ячĕпе тăракан колхоз, 21 тонна пама пулнăскер, çĕрулмине пĕтĕмпех турттарса пĕтерне. Паянхи куна районри колхозсем хатĕрлев пункчĕсене пурĕ 87 тонна çĕрулми леçнĕ.

А. МИТРОФАНОВА,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КАЛИНИНО, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе çĕрулмипе пахча-çимĕç парас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене çине тăрса пурнăça кĕртеççĕ. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне «Броневик» колхоз 900 пăт, Ленин ячĕпе тăракан колхоз 1.200 пăт, «Чăваш Коммуни» колхоз 900 пăт, «Çутталла» колхоз 780 пăт çĕрулми хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç.

Районри 25 колхоз Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç пама пулнине пĕтĕмпех пурнăçласа çитерчĕç.

ИНВАЛИДСЕН АРТЕЛĔНЧЕ

КАНАШ. Инвалидсен «Красный воин» артелĕн коллективĕ, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăй çине пысăк обязательствăсем илнĕ. Кунта кашни рабочи çав обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшать. Ăмăрту ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшать. Атă-пушмак çĕлекен цехри Капитонов юлташ ăмăртăвăн малтанхи кунĕнчен пуçласах кулленхи заданине 150 процент, Горбунов юлташ 153 процент, çĕвĕ çĕлекен цехри çĕвĕçĕ Яковлева юлташ 155 процент тултарса пыраççĕ. Çапла ĕçлесе рабочисем сентябрь уйăхĕнче пысăк çитĕнӳсем тунă. Сăмахран, çĕвĕ çĕлекен цехри закройщик Фомин юлташ уйăхри производство планне 400 процент, Чернова юлташ 200 процент, Яковлева юлташ 551 процент тултарнă. Паллă стахановецсемпе стахановкăсем цехран тухма пĕлмесĕр ĕçленĕ. Ирхине ĕçе ир пынă, ĕç хыççăн та киле кайма васкаман.

Çавăн пекех комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем хушшинче те ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Кунта пурĕ 10 бригада. Ăмăртура çĕвĕ çĕлекен цехри комсомолка Кочанова юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Вăл октябрь уйăхĕнчи планна 20 кун хушшинче 167 процент тултарнă. Бригадир Шалина юлташ хăй 193 процент, унăн бригади 144,4 процент, А. Баранова юлташ бригадинчи Чернова юлташ 172 процент, Мӳленкова юлташăн бригадинчи С. Архипова юлташ 191 процент, Семенова юлташăн бригадинчи А. Логинова юлташ 200 процент тултарнă. Кун пек примерсем татах та нумай. Артельте стахановецсен ĕç опытне ытти рабочисем хушшинче анлăн сарса пыраççĕ. Артельте Хисеп хăми тунă, час-часах канашлусем ирттерсе производство ыйтăвĕсене сӳтсе-яваççĕ, ĕç опычĕпе паллаштараççĕ. Çамрăк рабочисемпе учениксене мастерсем çумне çирĕплетсе, ĕçе вĕрентсе пыраççĕ.

Артель коллективĕ рабочисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлет. Рабочисем пурăнакан общежитисене пурне те юсанă, подсобнăй хуçалăхра туса илнĕ пахча-çимĕçсене рабочисене панă. Артелĕн хăйĕн столовăй пур. Хĕрлĕ кĕтес организациленĕ. Кунта ĕçсене йĕркелесе пыма 10 çынтан культсовет тунă. Кунсăр пуçне, кашни цехрах тата сменăра агитаторсемпе вулавçăсем пур, мĕнпур агитациллĕ-массăллă ĕçе çавсем урлă туса пыраççĕ. Агитаторсем рабочисем хушшинче тĕнчери лару-тăрупа вăрçă хыпарĕсем çинчен калаçусемпе докладсем ирттереççĕ. Хĕрлĕ кĕтес валли 29 экземпляр тĕрлĕрен хаçат-журналсем çырăнса илнĕ. Хĕрлĕ кĕтесĕн библиотекинче 1000 кĕнеке ытла шутланать. Хĕрлĕ кĕтес çумĕнче драма тата хор кружокĕсем ĕçлеççĕ. Драмкружок Октябрь уявĕнче Глебăвăн «Последняя встреча» ятлă пьесине лартма хатĕрленет.

Парторганизаци фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тунă. Фронтовиксен çемьисене пулăшма икĕ хутчен воскресник ирттернĕ. 4.600 тенкĕ укçа, 50 фуфайка, 50 мăшăр ача пушмакĕсем, 200 мăшăр чăлха, 100 шарф, 500 мăшăр алса, 30 свитер пухнă. Кунсăр пуçне, рабочисем фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонда кашниех пĕр эрнери ĕç укçине панă, Хĕрлĕ Çар валли боевой машинăсем тума 15.105 тенкĕ укçа хывнă.

Артель хăй Улатăрти «Союз инвалидов» артельпе ăмăртса ĕçлет.

З. МИТРОФАНОВА,
(Хамăр корр.).

ПЕТРОЗАВОДСК ÇЫННИСЕМ ХĂЙСЕН ТĂВАН ХУЛИНЕ ЮСАСА УРА ÇИНЕ ТĂРАТАÇÇĔ

Петрозаводск çыннисем, хăйсен тăван хулине юсаса ура çине тăратас тесе, ĕç пĕтнĕ хыççăн 300 пин сехете яхăн ĕçленĕ. Петрозаводск хулине ирĕке кăларнăранпа тăватă уйăх хушшинче 200 çурта яхăн юсанă, водопровода, электростанцисене, гостиницăна, прачечная юсаса çитернĕ. Хула урамĕсенче 2.000 йывăç ытла лартнă.

(ТАСС).

МОПР организацийĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсем

Кăçал ноябрĕн 15-мĕшĕпе декабрĕн 15-мĕшĕ хушшинче пирĕн республикăри МОПР ячейкисемпе фабрик-заводсенчи комитечĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсем, декабрĕн 1-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче районсемпе хуласенчи организацисенче конференцисем пулса иртмелле.

МОПР организаци республикăри конференцийĕ пулса иртнĕренпе 5 çул иртрĕ. Унтанпа МОПР организацийĕсенче сахал мар улшăнусем пулчĕç. Отечественнăй аслă вăрçă МОПР организацисен ĕçне те çĕнетсе лайăхлатма, вĕсен ĕçне фронтпа çĕршыв интересне пăхăнтарма хушрĕ.

Вăрçă çулĕсенче МОПР организацийĕсем сахал мар ĕçсем турĕç. Пирĕн республикăри МОПР организацийĕсем Хĕрлĕ Çар валли вăрçă техники тума 270.167 тенкĕ укçа пухса панă. Унсăр пуçне боецсем патне 150.000 тенкĕлĕх парнесем янă. Нумай организацисем госпитальсенче шеф ĕçне туса пыраççĕ. Вĕсем аманнă боецсемпе офицерсене хăвăртрах сывалма пулăшаççĕ, вĕсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе туса пыраççĕ. Концертсем, вечерсем ирттереççĕ, аманнă боецсемпе офицерсем валли хаçат-журналсем çырăнса параççĕ, госпитальсен библиотекине пуянлатма кĕнекесем пухаççĕ.

Республикăри организацисенчен Сĕнтĕр, Октябрьски районсенчи, Çĕмĕрлепе Улатăр тата Шупашкар хулисенчи организацисем лайăх ĕçленине палăртмалла. Вĕсем активпа таччăн çыхăнса ĕçлеççĕ, хăйсен ĕçне актив çине таянса туса пыраççĕ. Асăннă организацисем финанс планне тултарас тĕлĕшпе те малта пыраççĕ. Сăмахран, Октябрьски районри организаци (председателĕ Вишневский юлташ) çурçулти финанс планне пур тĕлĕшпе те нумай ирттерсе тултарнă. Финанс планне ăнăçлăн тултарнăшăн МОПР-ăн Октябрьски райкомне куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав панă. Сĕнтĕр, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи тата Шупашкар хулинчи организацисем те укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Анчах та МОПР организацисен ĕçĕнче çитменлĕхсем те чылай-ха. Чкаловски, Пăрачкав, Красноармейски районсенчи организацисем ку тарана çитсе те хăйсен ĕçне вăрçă тапхăрне тивĕçлĕ пек йĕркелемен. Хĕрлĕ Чутай тата Çĕмĕрле районĕсенче МОПР организацийĕсем пĕтĕмпех саланса кайнă. Мĕншĕн тесен ку районсенче парти организацийĕсем вăл ĕç çине тивĕçлипе çаврăнса пăхман, ĕçлеме çынсем тупса лартман. ВКП(б) Ишлей райкомĕ МОПР райкомĕн председательне курсра вĕренме янă. Анчах унăн вырăнĕнче ĕçлеме халиччен те çын тупса лартман.

Вăрçă çулĕсенче МОПР организацийĕсен активисчĕсем фронта кайрĕç. Çавна пула халĕ чылай районсенчи организацисенче суйламан председательсем ĕçлеççĕ. Ревизи комиссийĕсем те чылай çĕрте ĕçлеме пăрахнă. Отчетпа суйлав вăхăтĕнче çав çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтермелле. Кашни предприятипе учреждениере, шкулта, кашни колхозра лайăх ĕçлекен МОПР организацийĕ пултăр.

МОПР организацисенчи отчетпа суйлав пухăвĕсене лайăх ирттерес тесен, вĕсене ирттерме халех хатĕрленме тытăнас пулать. Пухусене ирттерме ĕç планĕсем тумалла, вăл плансене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлеме ответлă çынсем уйăрмалла. МОПР организацийĕсен ĕçĕсем çинчен стена хаçачĕсем çинче çутатмалла. МОПР умĕнче тăракан задачăсем пирки ăнлантарса парассине анлăн сарса пырса, членсен йышне ӳстермелле.

Паллах, МОПР организацийĕсем хăйсен умĕнче тăракан задачăсене партипе комсомол организацийĕсем пулăшмасăр ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пултараймаççĕ. МОПР организацисен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек йĕркелес тесен, партипе комсомол организацийĕсем вĕсене куллен пулăшни кирлĕ.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ Англире пурăнни çинчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 31-мĕшĕнче каçхине Англин ĕçпе наци повинноçĕн министерствинче совет профсоюзĕсен делегацийĕ ячĕпе йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура делегацин мĕнпур членĕсем, Англин ĕçпе наци повинность министрĕ Бевин, Англин ют çĕршыв ĕçĕн министрĕн заместителĕ Холл, Совет Союзĕн Англири послĕ Ф. Т. Гусев, посольство советникĕсем Саксин тата Кукин, тред-юнионсен конгресĕн генеральнăй секретарĕ Ситрин тата тред-юнионсен конгресĕн генсовет членĕсем пулнă.

Англири коммунистсен партийĕн съезчĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 28-мĕшĕнче Лондонра Англири коммунистсен партийĕн 17-мĕш съезчĕ уçăлнă. Съезд виçĕ кун ĕçленĕ. Съездра 754 делегат пулнă, вĕсенчен 149-шĕ хĕрарăмсем пулнă; делегатсемсĕр пуçне тата йышлă хăнасемпе пичет представителĕсем пулнă.

Съезда уçнă чухне коммунистсен партийĕн исполнительнăй комитечĕн секретарĕ Галлахер çапла каланă: съезд «Европăра вăрçă пĕтесси инçе мар юлнă вăхăтра уçăлать», «пĕтĕм Европăра демократиллĕ правительствăсем пулса тăрĕç, çав правительствăсенче вăрттăн ĕçлекен организацисен çыннисем чылай пулĕç. Нумай çĕршывсенче рабочи класс халĕ нихăçанхинчен те çирĕпрех пĕтĕçнĕ, социалистсемпе коммунистсем çĕнĕ правительствăсене кĕнĕ». «Вăрçă пулас хăрушлăха нумай ăрусем пурăнас вăхăта пĕтерсе лартас тетпĕр пулсан, пирĕн союзниксен пĕрлĕхне çирĕплетес шухăша кирек мĕнле ытти шухăшсенчен те мала хурас пулать, — тенĕ Галлахер. — Кашни союзлă çĕршывра прогресшăн тăрăшакан вăйсене пĕрлĕхлĕ рабочи юхăмĕ тавра пĕрлештерсен, çав асăннă пĕрлĕхе эпир çăмăлтарах та лайăхрах тума пултаратпăр».

«Эпир хамăр халăхăн чи лайăх та чи прогрессивнăй çыннисене пурне те çапла чĕнсе калатпăр, — тенĕ Галлахер: — эпир çак вăрçăра тунă аслă çитĕнӳсем хыççăн мир тăвас ĕçре те чаплă çĕнтерӳсем тăвассишĕн кĕрешмелле; çав çĕнтерӳсем пирĕн çĕршыва прогресшăн тăрăшакан этемлĕхĕн чи малти ретне илсе тухĕç, çав çĕнтерӳсене пула пĕтĕм тĕнчери халăхсен союзĕ ӳссе ларĕ».

Съезд коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕн Гарри Поллиттăн политикăллă отчетне итленĕ. Октябрĕн 30-мĕшĕнче съезд темиçе резолюци йышăннă, çав шутра — промышленноçа вăрçă йĕркинчен мирлĕ йĕркене куçарасси çинчен, ĕç укçи тĕлĕшпе тытса пымалли политика çинчен, демобилизаци йĕрки çинчен тата çар служащийĕсем валли—арçынсемпе хĕрарăмсем валли — тумалли условисем çинчен, çĕршывăн экономикăллă тĕп ресурсĕсене государство харпăрлăхĕ туса хурасси çинчен калакан резолюцисене йышăннă. Юлашки резолюцире (ăна парти председателĕн заместителĕ Пальм Датт сĕннĕ) çĕре, банксене, çĕркăмрăкне, энерги ресурсĕсене, транспорта тата хурçă тăвассине государство аллине пама кирли çинчен каланă. Çав резолюцие сĕнсе, Датт çапла каланă: çитес пĕтĕмĕшле суйлавра пĕрлешӳллĕ рабочи юхăмĕ тата мĕнпур прогрессивнăй çынсем пурнăçлама тăрăшма пултаракан программа çакăн пек ĕнтĕ, тенĕ. Тата çĕркăмрăк промышленноçне национализацилеме хушакан резолюци йышăннă. Çав резолюцире çапла каланă: промышленноçăн çак отраçлинче лайăхрах мелсемпе ĕçлемелле, тенĕ.

Съезд çавăн пекех тата Испани пирки резолюци йышăннă. Резолюци çĕнĕрен ирĕклĕ те демократиллĕ Испани туса хурас ĕçре Испани халăхне пулăшма чĕнет.

Съездра партин исполнительнăй комитетне суйланă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 2-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем ноябрĕн 1-мĕшĕнче ирхине Вальхерен утравĕ çине десант антарнă. Утрав çинче тăшмана малалла тапăнма икĕ çирĕп плацдарм тунă. Çыран хĕрри темиçе миля таран союзниксен аллинче. Флиссинген хулин самаях пысăк пайне те союзниксем йышăннă.

Союзниксен çĕр çинчи çарĕсен ударлă отрячĕсем Флиссинген хулине Шельда шывĕ вăррич кăнтăр хĕрринчен тупăсемпе персе тăрса хӳтĕленĕ вăхăтра аннă. Акăлчансен тинĕс пехоти Англи карапĕсем çинчи тупăсем персе хӳтĕлесе тăнă вăхăтра, çăмăл тинĕс-çар вăйĕсем пулăшнипе, Хĕвеланăç Капелле патĕнчи плацдарма тытса илнĕ. Бевеланд çурутравĕпе Вальхерен утравĕ хушшинчи дамбăн хĕвеланăç хĕрринче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем Шельда шывĕ çинчи Кискке патĕнче çапăçаççĕ. Слейс тата Хĕвеланăç Капелле пункчĕсене тăшмантан тасатнă. Союзниксен Марк шывĕ çинчи каççисен районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Кунтан кăштах хĕвеланăçнерехре, Капелле районĕнче, союзниксем Маас шывĕн кăнтăр хĕрринчи плацдарма аслăлатнă. Льесель хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем çĕнĕрен малалла куçнă.

Нанси хулинчен çурçĕртерехре нимĕçсене Летрикур тата Абоккур пункчĕсенчен хăваласа кăларнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Рур облаçĕнчи тата Голландири объекчĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă, çăмăл бомбардировщиксем Кельн хулипе Берлин хулине тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

АНГЛИ ÇАРĔСЕМ САЛОНИКИ ХУЛИНЕ КĔРСЕ КАЙНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче Англи çарĕсем Салоники хулине кĕрсе кайнă. Акăлчансен патрулĕсем тăшманпа çав хуларан хĕвелтухăçнерехре çапăçаççĕ.

Италири 8-мĕш армин Рабби шывĕпе Ронко шывĕ хушшинче çурçĕр еннелле наступлени туса пыракан Инди чаçĕсем Мельдола хули çывăхĕнче çав армин ытти чаçĕсем тунă укреплени патне пырса тухнă. Америка чаçĕсем Болонья хулинчен сакăр миля çурăра тăраççĕ. Ытти секторсенче патрульсем çеç кĕрешнĕ.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, ноябрĕн 1-мĕшĕнче тăшманăн Вена районĕнчи промышленность предприятийĕсемпе çулйĕрĕсене тапăннă. Ытти соединенисем Бродпа Загреб (Югослави) районĕсенче тата Албанире, Çурçĕр Италире, Адриатика тинĕсĕн çурçĕр пайĕнче кĕрешнĕ.

АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ ИСПАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат хăйĕн Бург-Мадам хулинчи (Пиреней çурутравĕ) корреспонденчĕн Филипп Джорданăн пĕлтерĕвне пичетленĕ. Испани чиккинчи темиçе вырăна пырса курнă корреспондент çав пĕлтерӳре çапла калать: французсен шалти хĕçпăшаллă вăйĕсен шутĕнче тăракан испанецсен батальонĕсем Испани çĕрĕ çине кĕрсе кайман.

Тепĕр енчен, Испани партизанĕсем Испанире ĕçсем саралса каяссине кĕтсе тăмаççĕ. Вĕсем хăшпĕр районсенче уççăнах кĕрешме пуçланă. Вĕсем Сорт хулине тата виçĕ яла тытса илнĕ.

«Ньюс кроникл» хаçат корреспонденчĕ Вильям Форест Парижран çапла çырать: Франко Испанири хумханусене пусарса лартса çар тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнать, тет.

Партизансене халăх питĕ нумай пулăшать.

ГЕРМАНИ ПРОМЫШЛЕННИКĔСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаçатăн Берн хулинчи корреспонденчĕ «Ля сюисс» хаçатăн пĕлтерĕвне парать. Çав пĕлтерӳре çапла каланă:

Гитлер Германин «халăх ополченине» 14 çултан пуçласа 60 çула çитнĕ мĕнпур арçынсене пурне те мобилизацилеме панă приказ пирки нимĕç промышленникĕсемпе государствăна ертсе пыракансем хушшинче хирĕçӳ тухса кайнă. Нимĕçсен паллă промышленникĕсене чылайĕшне тытса хупнă. Çав тытса хупнă промышленниксенчен пиллĕкĕшĕ темиçе çĕр предприяти хуçисен ячĕпе влаçсене заявлени çырса панă. Вĕсем çав заявленире «халăх ополченийĕ» çинчен кăларнă закона улăштарма ыйтнă, мĕншĕн тесен унччен пулнă мобилизацисене пула Германире ĕç вăйĕ вĕçне çитиччех сахалланса юлнă. Ĕç кунĕ питĕ вăрăм, çавăнпа та промышленниксем çапла шутлаççĕ: рабочисене ĕç вăхăтĕнче е ĕç хыççăн çар ĕçне вĕрентни производствăшăн питĕ хăрушă пулса тăрать. Унсăр пуçне, промышленниксем çакна астутарнă: тимĕр тăпри запасĕсем пĕтсе пыраççĕ. Çавăн пекех тата промышленниксем çакна палăртнă: Венгри боксичĕсем Германи аллинчен тухса ӳкни нимĕçсен çар промышленноçне тӳрремĕнех хăратса тăрать. Калаçу вăхăтĕнче промышленниксем те, власть представителĕсем те хĕрӳллĕн тавлашса кайнă, вара правительство представителĕсем промышленниксене «хальхи лару-тăрăва ăнланма пултарайман пирки тата саботаж тунăшăн» тытса хупма приказ панă.

ОККУПАЦИЛЕНĔ РАЙОНСЕНЧЕ ГИЛЕРОВЕЦСЕНЕ ТАПĂННИ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Моргон тиднинген» хаçачĕ Берн хулинчен илнĕ пĕлтерĕве пичетленĕ. Пĕлтерӳре çапла каланă:

«Гиммлер нацистсен партийĕн членĕсем çул çӳренĕ чухне вĕсене сыхлама пысăк мерăсем йышăнма хушнă. Юлашки вăхăтра нацистсен партийĕн членĕсене вĕсем оккупациленĕ районсем тăрăх çӳренĕ чухне вĕлерме тапăнни нумай пулнă».

ТУРЦИРЕ ТУРЦИ РЕСПУБЛИКИ 21 ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ УЯВЛАНĂ

АНКАРА, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян, Турци республикине туни 21 çул тултарнă май, Анкара хулинче Анкарари гарнизонăн чаçĕсен парачĕ пулнă. Парад пуçланас умĕн Турци президенчĕ Исмет Иненю кĕске сăмах каланă, вăл халăха уяв ячĕпе саламланă. Парадра дипломатиллĕ корпусăн пур членĕсем те тата Турципе ют çĕршывсен пичечĕн представителĕсем пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти халь уçăлнă электромеханически техникум çынсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникумра икĕ отделени пур: кăнтăрлахи отделени (унта производствăра ĕçлеме пăрахса вĕренмелле) тата каçхи отделени (унта производствăра ĕçлеме пăрахмасăрах вĕренмелле).

Техникумра виçĕ çул çурă вĕренмелле.

Техникум çакăн пек специалистсене вĕрентсе хатĕрлет: 1) метала сивĕлле касса ĕçлекен техник-технологсене тата 2) электричествăллă аппаратсем тăвакан техник-электриксене.

Техникума вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ. 7-мĕш класран отличник пулса вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

9-мĕш класран вĕренсе тухнисене 2-мĕш курса илеççĕ.

10-мĕш класран вĕренсе тухнисене хăйне уйрăм группăна илеççĕ, унта икĕ çул вĕренмелле.

Заявленисемпе пĕрле çак документсене ямалла: а) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, б) автобиографи тата в) паспорт (ăна техникума пырсан кăтартмалла).

Студентсене рабочисен нормипе снабжени параççĕ, столовăйра апатлантараççĕ тата стипенди параççĕ. Ытти хуласенчен [illegible]нисене общежитие вырнаçтараççĕ.

Техникумăн каçхи отделенине те заявленисем йышăнаççĕ.

Заявленисене куллен ирхине 10 сехетпе 14 сехет хушшинче тата каçхине 18 сехетпе 21 сехет хушшинче техникум çуртĕнче йышăнаççĕ. Техникум адресĕ: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00777. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 16.000 экз.